## Пирĕн календарь

# В. Агеев 70 çулта

Нумай енлĕ пултарулăхра палăрнă художник: живописçе, графикăна, монументла искусствăна пахаласа ĕçленĕ халăх художникĕ, чăвашсен тава тивĕçлĕ художникĕ, К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх премийĕн лауреачĕ, ЧР наукăпа искусство наци академийĕн член-корреспонденчĕ, пирĕн ентеш Владимир Иванович Агеев ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче 70 çулхи юбилейне паллă тăвать.

Владимир Ивановича тивĕçлипех халăх художникĕ хисеплĕ ят панă. Халăхран тухнă, халăх нушине халăхпа тӳссе иртернĕ, халăх шăпине тулли сăнарсенче сăнланă. Хамăр районти Аслă Елчĕк ялĕнче 1932 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче çуралнăскер, вăл ачаранах хамăрăн искусствăна пуçаракансемпе — М. С. Спиридоновпа, Н. К. Сверчковпа, А. Ф. Мясниковпа, А. Д. Деомидовпа— хутшăннă, художникăн тертлĕ профессине пикеннĕ. Шупашкарти художество училищинче, хаяр вăрçă хыççăнхи выçлăх çулсенче, таланчĕ тĕлĕнмелле чаплă пулнипе, тăрăшса вĕреннипе, вĕçĕхĕррисĕр канмасăр ĕçлеме пултарнипе тĕлĕнтернĕ. Пĕтĕм тĕнчери халăхсен историне, культурине, искусствине çине тăрса тĕпчenипе пĕрлех вăл тăван халăхăн пысăк пулăмлă аваллăхне, ку чухнехи ытлă-çитлĕ пурнăçне тĕпченĕ, ăна халиччен курман-шухăшламан енчен илсе сăнара куçарнă, ун синчен сĕнĕлле, чăн пулниче тĕпрен илсе шухăшлама-хаклама вĕреннĕ.

Станоклă живописпе графикăра В. И. Агеев пуринчен ытла историпе фольклор темисене тимлет. 1953 çултах унăн Елчĕк аваллăхĕпе çыхăннă пулăмсене сăнлакан ĕçне Мускаври выставкăра чăвашлăха ĕнентерекен, çĕнĕлле сăнлăхне никĕслекен произведени выраннe илсе хакланă. «Аслă çĕр», «Чăваш вăрманĕ», «Атăл çинчи чул ту» ăсталаса художник А. И. Миттов пултарулăхĕпе çыхăнтаракан темăсене пуçланă, вĕсене чăваш тĕсĕ-йĕрĕнче сăнарлама пултарнă. «Атăл пăлхарĕсем Аслă Таяпара», «Чăвашсен утлă отрячĕ Пăкача çарĕнче», «Граждан вăрçинчи тытăçу» ятлă ӳкерчĕксенче В. И. Агеев ырлăх-мухтавлăха та, паттăрлăха та, пуласлăхшăн ирсĕр пĕтеслĕхлĕ самант-пулăмсене те чăнлăх шайне çĕкленĕ. Ĕлĕкхипе хальхи пурнăç çыхăнăвне, таталми пĕрлĕхне ăста «Елчĕкри пасарта», «Вăйă карти» картинăсенче, «Асатте çапла калатчĕ» графика ярăмĕнче, «Нарспипе Сетнер», «Çурасна хĕре туй тумне тăхăнтарни» произведенисенче пуян туйăмпа сăнланă.

В. Агеевăн ӳкерчĕкĕсем пĕтĕм Раççейĕпех саланнă. Вăл ĕçĕсемпе çĕршыври нумай-нумай выставкăсене хутшăннă. Унăн 20 ытла ĕçне СССР, РСФСР Художникĕсен союзĕн выставкисен дирекцийĕ илнĕ. Германири музейсенче те ӳнерçĕн çирĕме яхăн ĕçĕ упранать.

Çĕршыври куракан Владимир Ивановича ытларах кĕнеке графики тăрăх пĕлет, вăл икçĕр ытла кĕнеке валли ултă пин ытла тĕрлĕ ӳкерчĕк тунă. «Капкăн» журналта унăн карикатурисене шутласа те пĕтереймĕн. «Хатĕр пул», «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенчи ӳкерчĕксене те нумайăшне Агеев аллинчи сăрăсемпех ăсталанă.

В. Агеев художник ĕçĕсен тарăнлăхне, вĕсене пĕрре курсан часах манса каймa çуккине, унти тĕссен хăйне евĕр вылявне куракан асăрхамасăр тăма пултараймасть. Çавăнпа та ӳнерçĕ ӳкерчĕкĕсене кирек кам та тӳрех палласа илнинчен ним тĕлĕнмелли те çук.

Юбилей тĕлне Шупашкарти художество музейĕнче. Союзсен сурчĕ сывăхĕнче, В. И. Агеевăн выставки ĕçлет.

И. АДЮКОВА.